Чăвашсен «Хыпар» хаçачĕн пĕрремĕш
редакторĕ, чăвашсен чи малтанхи профессорне
Н.В.Никольские халалланă
литературăпа музыка композицийĕ

# «ЧĂВАШ УЛĂПĔ»

(Пуçламĕшĕнче «Тăрна» юрă кĕвви янăрать)

**1-мĕш ертӳçĕ:** Ырă кун пултăр, хаклă хăнасем, вĕрентекенсем, ачасем!

**2-мĕш ертӳçĕ:** Паян эпир пысăк уява пуçтарăнтăмăр. Сцена çинче те, залра та йĕри-тавра Николай Никольский хушаматне вулатпăр.

**1-мĕш ертӳçĕ:** Кам-ши вăл Николай Васильевич Никольский?

**2-мĕш ертӳçĕ:** Мĕн пĕлетпĕр эпир ун çинчен?

**1-мĕш ертӳçĕ:** Çĕр-шывсем нумай тĕнчен,
Пĕринчен тепри илемлĕ,
Эпĕр – Улăп йăхĕнчен,
Чи ирĕклине иленнĕ.

**2-мĕш ертӳçĕ:** Халăхсем нумай тĕнчен,
Пĕринчен тепри тĕреклĕ,
Эпĕр – Улăп йăхĕнчен, Сапăр та сатур чĕреллĕ.

**1-мĕш ертӳçĕ**: Эпĕр – Улăп йăхĕнчен:
«Атăл çи – тăван кил!» - тетпĕр,
Туссене мĕн пур енчен
Çăкăр-тăварпа кĕтетпĕр.

**2-мĕш ертӳçĕ:** Эпĕр – Улăп йăхĕнчен,
Тымарсен чакми хăват пур,
Ĕмĕт инçете чĕнсен
Çăлтăр витĕр çул хыватпăр.

**1-мĕш ертӳçĕ:** Николай Васильевич чăвашсен пĕрремĕш хаçатне «Хыпара» никĕслекенĕ, этнограф, ученăй-энциклопедист, паллă историк, общество деятелĕ, Хусан университечĕн профессорĕ.

**2-мĕш ертӳçĕ:** Паллă писатель, журналист, филологи наукисен кандидачĕ Константин Петров ахальтен мар ун çинчен Аслă Улăп тесе каланă.

**1-мĕш ертӳçĕ:** Халĕ сире Чăваш халăх поэчĕ Васлей Давыдов-Анатри çырнă «Николай Никольский, тав сана» сăвăпа паллаштаратпăр (вĕренекенсем черетпе калаççĕ).

**Вĕренекен:** Николай Никольский, тав сана,
Пултаруллă, ĕçчен тăвана!
Юрататпăр эпир чун-вартан
Эсĕ уçнă «Хыпар» хаçата.

Николай Никольский, тав сана, -
Тăван халăх манмасть ыр ятна.
Эсĕ туртнă пире çутталла,
Ĕмĕрех çав çĕклет кăмăла.

**Вĕренекен:** 1878 çул, çу уйăхĕн 19-мĕшĕ. Муркаш районĕнчи Купăрля ялĕнче çĕр виçевçи çемйинче Коля ятлă ывăл çуралать. Шкулта лайăх вĕреннĕ вăл, çамрăклах ашшĕ-амăшне пулăшнă. Пуçламăш шкул пĕтерсен, пĕлӳшĕн çунакан Кольăна Шупашкарти духовнăй училищĕне леçеççĕ.

**Вĕренекен:** Пĕчĕк ачан пуласлăхĕ ытлашши тĕксĕмех пулман. Ашшĕ, Василий Никитич, хутла пĕлнĕ, вырăнти мишавай ĕçне туса пынă. Амăшĕ – вырăс хĕрарăмĕ. Вăл ялта пурăнса чăвашла чылай чăвашран лайăхрах калаçма вĕренсе çитнĕ.

**Вĕренекен:** 1893 çулта Николай Васильевич Хусанти духовнăй семинарине вĕренме кĕрет. Тăван халăхĕн историйĕпе, этнографийĕпе интересленме пуçлать. Унтан – духовнăй академи. Пĕр вăхăтрах Хусан университечĕн профессорĕсен лекцийĕсене итлеме çӳрет. Николай Иванович Ашмаринпа, ытти паллă ученăйпа туслашать.

**Вĕренекен:** Купăрля каччи академирен вĕренсе тухать. Хусанрах духовнăй семинарире ĕçлеме пуçлать. Историпе этнографире пысăк ӳсĕмсем тăвать. Пулас ученăй 25 çултах чăвашла календарь – «Çулталăк кĕнеки» кăларма пултарнă.

**Вĕренекен:** 1907 çулхи утă уйăхĕ. Купăрля каччи хăйĕн пурнăçне Вăрнар тăрăхĕнчи Мăн Явăш чиркĕвĕн настоятелĕн, Владимир Яснитскин Шура ятлă хĕрĕпе çыхăнтарать. 29 çулхи каччăпа 19 çулхи хĕр венчете тăраççĕ. Пĕр-пĕрне çав тери хисепленĕ. Юратнă упăшкин сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе вырăс хĕрĕ, Шура, сăваплă тухтăр, вутта-шыва кĕме те хатĕр пулнă. Çак Санюк пулман пулсан, ку Никольский пулаймастчĕ тесе каланă пĕррехинче Николай Васильевич.

**Вĕренекен:** Санюк хăйĕн мăшăрĕпе Купăрляна яланах пырса çӳренĕ. Уйрăмах çуллахи кунсенче. Чăваш тумне тăхăнса тăванĕсем патне хăнана кайнă, уявсене хутшăннă. Упăшкине вăйлă юратнипех чăвашла калаçма, чăвашла юрлама вĕреннĕ. Николай Васильевич сĕрме купăс, шăпăр-кĕсле каланă. Çĕнĕ кин вара чăвашла юрăсем шăрантарнă. Уйрăмах «Уй варринче лаштра юман» юрра юрласа пĕтĕм ял халăхне тĕлĕнтернĕ. Ку юрă Николай Васильевичăн чи юратнă юрри пулнă.

*(Вĕренекенсен ушкăнĕ чăваш халăх юррине – «Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать» - юрлать).*

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать те,
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Шыв юхать те,
Шыв юхать те чул юлать…

**1-мĕш ертӳçĕ:** Паллă çынсем чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ Николай Никольский çинчен мĕн калаççĕ-ха?

**Вĕренекен:** «Атăл тăрăхĕнчи халăхсен йăли-йĕркине тĕпчекенсенчен чи пысăкки хальхи вăхăтра Никольский шутланать», - тенĕ Поппе профессор 1929 çулта.

**Вĕренекен:** «Этнографи ĕçĕсене пăхсан, чăвашсен культурине наукăра çутатса тата çак ĕçе ертсе пыма пултаракан чи лайăх хатĕрленнĕ çынсенчен пĕртен-пĕр Никольские çеç палăртма пултаратпăр», - тесе çырать 1939 çулта Николай Ашмарин профессор.

**Вĕренекен:** Марр академикăн сăмахĕсем: «Çакна пĕлтерес тетĕп: эпĕ чăвашсем пирки мĕн çырнине хак парас тесен, çакна тума Никольский профессор ĕçĕсем питĕ пулăшнине шута илмелле».

**Вĕренекен:** Хусан университетĕнче ĕçленĕ Вальтер Андерсон профессор 1929 çулта çапла çырнă: «Никольский ĕçĕсен пуххи лайăх йĕркелесе çитернĕ чăваш халăхĕн фольклорĕпе, этнографийĕпе тата историйĕпе çыхăннă ăслăлăх архивĕ шутланать. Çĕр чăмăрĕ çинче питĕ сахал халăхăн кунашкал фольклор архивĕ пур».

**Вĕренекен:** «Хусанти литература шкулне йĕркелесе яма Николай Васильевич нумай вăй хăварнă», - тесе çырать 1992 çулта Юрий Артемьев профессор.

**2-мĕш ертӳçĕ:** Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çырнă «Салам сонечĕ».

(Виçĕ вĕренекен вулать):

Тахçан-тахçан, ача чухнех,
Сире пĕрремĕш хут тăнлуçăн,

Паян çав кун çывхарчĕ мар-и?
Мĕн пур Тăван çĕр-шывăм тăрăх

Эсир мана кăтартрăр уççăн
Чăвашăн тӳсĕмлĕ чунне.
Хусанкай хӳмисем çумне
Пуласлăх хăпаратчĕ куçăн,
Часрах тухасшăн ун çулне.

Янрать чăваш ăс-халĕ хурçăн.
Эппин – шăтрех, сая каймарĕ
Эсир акса хăварнă вăрлăх.
Тавси, профессор! Тайма пуçăм!

**Вĕренекен:** Николай Никольский çырнă ĕçсен пуххи 300 тома яхăн. Улăп профессор чăваш халăх историне тĕпченĕ май Атăл тăрăхĕнчи халăхсене çутта кăларас тесе те нумай ĕçленĕ. Вăл тăрăшнипе нумай-нумай шкул уçнă, çав шутра виçĕ аслă шкул.

**Вĕренекен:** Чи пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ вара – «Хыпар» хаçат йĕркелени. 1906 çулхи кăрлачра Никольский чăвашсен чи малтанхи хаçатне «Хыпара» кăларма пуçлать, хăех редакцилет, хăйĕн укçипе хаçатăн 22 номерне пичетлет.

Вĕренекен: «Пирĕн чĕлхе» ятлă статья аслă ученăй чăваш халăхĕ валли çырса хăварнă халал пек туйăнать. «Чăвашсем, хăвăрăн чĕлхĕре ан манăр, ăна ан çухатăр, ăна çухатсан эпир хамăр та çухалатпăр, чăваш ячĕ те çухалĕ. Ан çывăрăр, вăранăр», - тесе çырать вăл.

**Вĕренекен:** Муркаш каччи – вырăсла-чăвашла, чăвашла-вырăсла словарьсен авторĕ. Халăх медицинине питĕ лайăх пĕлнĕ. Купăрляра темиçе çĕр тĕрлĕ эмел курăкĕ ӳстернĕ, çынсене сипленĕ.

**Вĕренекен:** Николай Васильевич Хусанта ĕçлеме тытăнсанах укçа-тенкĕпе те, çулла яла килсе ĕçлесе те килтисене пысăк пулăшу панă. Ашшĕпе амăшĕ хăйсем виличченех ăслă ывăлне чунтанах юратнă, хисепленĕ.

**Вĕренекен:** Пурнăçа тем пек юратсан та, ырă ĕмĕчĕсем калама çук пысăк пулсан та 84-ра пыракан Никольский йывăр чире çĕнтереймест. 1961 çулхи чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕнче харсăр чĕри тапма чарăнать. Хисеплĕ профессора Хусанти Ар масарне чыслăн пытарнă. Вăл пирĕнпе пĕрле çук, анчах наукăри ĕçĕсем, «Хыпар» хаçат чĕрĕ.

**2-мĕш вĕренекен:** Никольские тăван ялĕнче пурте юратнă. Вăл мăшăрĕпе вăййа тухнă, ял çыннисемпе пĕрле чăваш юррине шăрантарнă, кĕвĕ янрасан чăтса тăрайман, тапăртатса ташланă.

**1-мĕш вĕренекен:** «Автан» вăйă ***(ачасем выляççĕ). («Çерем ватса вир акрăм» кĕвĕ янăрать).***

**2-мĕш вĕренекен:** «Йăлăнтарни» - пĕчĕк инсценировка.

Вĕренекенсем Никольскин чи юратнă «Уй варринче лаштра юман» юррине шăрантараççĕ.

Уй варринче лаштра юман,
Атте тесе, ай, кайрăм та,
«Килех, ывлăм», - ай, темерĕ,
Чун хурланчĕ – макăртăм та…
Уй варринче чечен çăка,
Анне тесе, ай, кайрăм та,

«Килех, тусăм», - ай темерĕ:
Чун хурланчĕ – макăртăм та…
Уй варринче шурă хурăн,
Савни тесе, ай, кайрăм та
Килех, тусăм», - ай темерĕ:
Чун хурланчĕ – макăртăм та…

**1-мĕш вĕренекен:** Акă эпир ученăй-профессор çул-йĕрĕпе утса тухрăмăр.

**2-мĕш вĕренекен:** Тĕлĕнмелле çын пулнă вăл, ăшă кăмăллă, сăпайлă, ăслă, пултаруллă, мал ĕмĕтлĕ. Унăн ячĕ пирĕн пурнăçра ĕмĕр-ĕмĕр сывă пултăр, нихçан та манăçа ан тухтăр.

Л.В.Никифорова, Г.А.Керукова
Шупашкарти 49-мĕш шкулта чăваш чĕлхине вĕрентекенсем